249

№ Аҫ[illegible]паҫа кӗнеки 17

ТРУПИНА М.

# АТАСЕМ ВАЛЛИ СЫРНӐ
# ИУМАХСЕМ

Ҫаваш Ре[illegible]ублӗкӑнҫи Кӗнеке Кӑларакан Уҫрӑм
Шупашкар—1925 ҫ.

Парахат шом с кизу
котод ели дни Электрон
~~[illegible]~~ Мешинитами
Электрицщиев

23

№ Аҫа-пăҫа кĕнеки 17

АБОНЕМЕНТ

ТРУПИНА М.

# АТ,АСЕМ ВАЛЛИ ҪЫРНĂ ЙУМАХСЕМ

1037

ПРОВЕРЕНО 1936 г.

ҪĂВАШ РЕСПУПЛĔКĔНҪИ КĔНЕКЕ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ
Шупашкар—1925 ç.

Чувашлит, № 1024. Напеч. 3,000 экз.

г. Чебоксары, Типография „Чувашская Книга"

25-70

## I. Анкарти кĕтессинҫе.

Йĕтем вĕҫĕнҫе кĕтесре, лапҫăк арпа лупасси ларатҫĕ. Ҫав арпа лупасси айĕнҫи тăпрана ҫăмăр та лекмен, хĕвел те кĕмен. Ҫаванпа ҫав арпа лупасси урайне пĕр курăк та шăтман. Кĕркунне, аван ҫапса пĕтерсен, хуҫи ҫав арпа лупассине тепĕр ҫĕре куҫарса лартрĕ. Арпа лупасси айаккинҫе ӳсекеп йăвăҫсем, курăксем ҫав апра лупассине куҫарнăшăн хĕпĕртерĕҫ.—Пирĕн валли вырăн пушанса йулҫĕ, килес ҫул пире ӳсме ирĕк пулат, тесе шухăшласа лараҫҫĕ.

Пуринҫен ытла ҫав арпа лупассине куҫарнăшăн карта хĕрринҫе ӳссе ларакан вĕрене хĕпĕртенĕ. Вăл шухăшлат: килес ҫуркунне ҫак ирĕкленнĕ вырăна епĕ пĕр виҫ-тăват турат ӳстерсе ҫăсса йаратăп, тата айалтан хунав кăларасҫĕ-ха: пĕр курăк та ан шăтайтăр ку вырăнта, пĕтĕмпех хамăн йышăнасҫĕ-ха ку пушаннă вырăна. Ирĕккĕн ӳсесҫĕ те, пысăкрах, ҫаплăрах пуласҫĕ, тет.

Çуркунне çитрĕ. Хĕртсе хĕвел пăхат. Ăшă çил кăнтăр йенҫен хуллен вĕрет. Куракcем, йăвăçсем йешере пуçларĕç. Арпа лупасси вырăнĕ çеç пушă выртат. Вĕрене çав вырăн пушшине курса хĕпĕртет. Туратсем, хунавсем кăларас, тесе шултăра кăҫкăсем хатĕрлесе хуҫĕ. Пĕр икĕ ернерен вĕренен айалтан виç-тăват хунав шăтса тухрĕ, çӳлтен пилĕк-ултă турат ӳсе пуçларĕ.

Хĕвел пăхат. Ăшă çил вĕрет. Вĕрене çулçине выҫатат. Вĕрене хĕпĕртет. Ирĕккĕн ӳсеççĕ-ха манăн туратсем, хунавсем. Мĕн тĕрлĕ аван! Мана пĕр пек хĕвел ăшăтса тăрат, нимĕн те хупласа кансĕрлемест. Вĕрене çапла шухăшласа савăнса ларат. Çӳлти тураҫĕсен пӳрнелле çулçиçене пĕр çилсĕрех выҫатат.

Пĕр ирхине, хĕвел тухнă тухманах, çатан карта айĕнҫен пĕр çамрăк Ҫи-ҫи йатла шăши сиксе тухрĕ. Вĕрене айне пырса ларҫĕ те, сухаллисене йакаткаларĕ. Хĕп-хĕрлĕ çуталса хĕвел выҫат. çатан карта хĕрне ăшшăн ӳкет. Ҫи-ҫи арпа лупасси вырăнĕ тăрăх пĕрре-иккĕ йăпăртатса ҫупса çавăрăнса та

илҫӗ. Арпа лупасси вырӑнӗ шӑлса тасатнӑ йӗтем пек йап-йака. Пӗр тӗлте ҫеҫ темӗскер сип-симӗс шӑтса ларнӑ. Ҫи-ҫи ҫак ӳсекен йапалана курсан ҫупса пыҫӗ те, симӗс ҫулҫисене шӑршласа, сӑмсипе сухаллисене выҫаткаласа тӗртсе пӑхрӗ. Мӗн йапала-ши ку? тесе шухӑшлаӗ. Шухӑшласа тӑҫӗ-тӑҫӗ те, хайхи астуса илҫӗ.—Е-е... куршанкӑ-ҫке ку, терӗ Ҫи-ҫи хӑй ӑшӗнҫе. Арпа лупассине куҫариҫҫен, ҫак Ҫи-ҫи хӑйӗн ашшӗ-амӑшӗпе, пӗтӗм тӑванӗсемпе арпа лупассинҫе вырта-кан вак улӑм айӗнҫи шӑтӑкра пурӑннӑ. Пӗрре кӗркунне Ҫи-ҫи амӑшӗ, тулӑ капанӗ айӗнҫен тавӑрӑннӑ ҫухне, ҫурӑмӗ ҫинҫе пӗр куршанкӑ ҫакса тавӑрӑннӑ. Ҫав пуӗсӗр куршанкӑ шӑши ҫурӑмӗ ҫине сисмен хутран таҫтан ҫӑваран пырса ҫыпӑҫнӑ. Ҫи-ҫи амӑшӗ киле тавӑрӑнҫӗ те, куршанкине ҫурӑмӗ ҫинҫен илсе пӑрахасшӑн, анҫах алӑпа та, ҫӑварпа та ҫурӑм ҫине ҫитсе куршанкӑна илсе пӑрахмалла мар. Ҫи-ҫи амӑшӗ куршанкӑна илсе пӑрахас тесе арман пек ҫавӑрнаӗ. Шалт ӑшша пиҫрӗ. Ҫи-ҫи ашшӗ килге ҫук-ҫӗ. Кӑшт тӑрсан ашшӗ килҫӗ те, куршанкӑна арӑмӗ

çурăмĕ çинҫен тĕкĕ-çӳçĕпе кăларса пăрахрĕ. Ҫи-ҫи амăшĕн вара çурăмĕ пĕр тĕлте ҫылăйҫҫен çара çӳрерĕ. Куршанкăна Ҫи-ҫи ашшĕ шăтăкран кăларсах пăрахрĕ. Куршанкă пăрахнă вырăнта, çуркунне пулсан, çур нӳрĕпе арпа лупасси урайне пĕр вĕтĕ, симĕс тĕме шăтса ларҫĕ. Куршанкă шăтасса шăтрĕ те, çăмăр лекмен, хĕвел кĕмен пирки ӳсеймерĕ. Пĕҫĕк тĕме пулсах çу касрĕ. Кăçал ирĕкре куршанкă пĕлтĕрхи пек мар, аван ӳсет пек туйăнаҭ: çулçисем шултăрарах та, симĕсрех те. Çынсем ку куршанкăран шăтнă курăка «хупах» теççĕ. Ҫи-ҫи амăшĕ хупаха нит йуратмасҭ.—Ах, тăшман вăл хупах! Куршанки ӳсет те, çынсем вара епĕр тырă пулĕмне кĕрекен шăтăксене куршанкă ҫике-ҫике хураççĕ. Пит усал вăл куршанкă, пит тирет, мана вăл пĕрре çурăм çине çакланса тăнтай йаҫĕ, тесе йатлаçаҭ вара хăш ҫухне Ҫи-ҫи амăшĕ. Те хĕвел пит илемлĕ пăхнăран, те Ҫи-ҫи çамрăк майĕпе ахаљ ырă кăмăллă пулнăран, хупаха амăшĕ пек йатлаçса туса тăмарĕ. Йака çĕртре пĕрре-иккĕ сиккелесе выљакаларĕ те, курăк çине тухса йăлтăртатса

тăракан сывлăма ĕçме тытăнтђĕ. Ĕçсе тăрансан хĕвел çинтђе ăшăнса хĕпертесе лартђĕ те, аллипе питне шăлкаласа килне вĕлт! турĕ.

Ир пулаҭ те, каç пулаҭ. Хĕвел ирĕккĕн пăхнипе, çуллахи çăмăр нўрĕпе хупах сарăлса ўсе пуçларĕ. Малтан хупах çулçисем вĕтĕрех тђĕ, халĕ ĕнтĕ хупах купăста пек сарăлса лараҭ. Пурăнсан пурăнсан хупах пит ахăрса ўссе карĕ. Сарăлкаласа çеç лараҭ Унталла та, кунталла та тураҭђĕсене салатса йанă. Аллисене тђăсса йанă пек лараҭ.—Ан тивĕр мана, ан пырса çыхланăр ман таврашă, ан канçĕрлĕр мана ўсме, тенĕ пек туйăнаҭ. Çатан çўлĕш лăп пулнă. Йăвăç пек лараҭ. Патне ан пыр. Пĕлтĕрхи пĕтђĕк вĕт тĕмене шухăшласан ĕнепмелле те мар, ку хупах вĕт тĕмерен ўсмен, урăх пысăк йапаларан шăтса ўснĕ пек туйăнаҭ. Тураҭђĕсем вĕçĕнтђе хупах тўме пек тђăмăрккасем ўстертђĕ, тђетђек кăларма шухăшлаҭ пулас. Вĕрене хăйĕн пысăк, мăнкăмăллă шухăшĕсемпе пуçне çўлелле çеç çĕклесе лараҭтђĕ. Халĕ ĕнтĕ, хупах вĕрене хунавĕсене хупăрла пуçласан, вĕрене хупаха çилентђĕ те, калаҭ:—Есĕ мĕн йĕркепе çак вырăнта

ӳсее ларатӑн? Арпа лупассине куҫарсан, ку пушӑ вырӑна пӗтӗмпех епӗ хам хунавсем, туратсем валли йышӑннӑҫҫӗ. Есӗ ӑҫтан ҫӑваран килсе шӑтса ларӑтӑн кунта? Мӗншӗн есӗ ман хунавсене хӑвӑн лапка ҫулҫусемпе хупӑрлатӑн? Мӗнле пурӑнмалла санпала? Есӗ кӑҫалах ку пушӑ вырӑна пӗтӗмпех йышӑнтӑн, килес ҫул вӑррусем те ҫакӑнтах шӑтса ӳсе пуҫласан, мӗн курмалла санпала? Пӗтеретӗн-ҫке есӗ! Епӗ сана асту-у!

— Питех ан йатлаҫсам, терӗ хупах вӗренене хирӗҫ.—Епӗ кунта арпа лупассине куҫариҫҫен пӗр ҫул малтан шӑтнӑ. Епӗ кирек ӑҫтан килсе шӑтнӑ пулам, санӑн унта ӗҫ ҫук. Манӑн вӑрӑсемшӗн есӗ ан хӑра. Вӗсем кунти вырӑнсӑр пуҫне те хӑйсем валли шӑтса ӳсмеллӗх вырӑн урӑх ҫӗрте тупӗҫ.

Вӗрене вара нимӗн те шарламарӗ. Хӑйӗн пӳрнеллӗ ҫулҫисене ҫил майӗпе выҫаткаласа илҫӗ те, пуҫне каплех ҫӳлелле ҫӗклерӗ. Хӗвелпе кӑвак пӗлӗте ҫеҫ пӑхса тӑраҭ.

Ҫу иртесси айакра мар. Пур ӳсекен йапаласем те вӑррисене ӳстерҫӗҫ. Вӗрененӗн те вӑррисем ҫитӗнеҫҫӗ. Икӗ ҫунатлӑ, вӑр-вӑр

çеç вĕçкелесе çакăнса тăраççĕ. Вĕрене хăйĕн вăррисемпе мухтанат̆:

— Манăн аҫасем пит аван! Мĕн тĕрлĕ вĕсем! Лĕпĕ пек. Майлă çил пулсассăнах таçта та вĕçсе кайма пултараççĕ. Таçти çĕре те вĕçсе кайса вĕрене йăхне ĕрҫетĕç, тет.

Хупахăн та куршанкисем çитĕнҫĕç. Вĕрене хупаха калат̆:

— Санăн аҫусен мĕн илемĕ пур? Ах, пут̆сĕр йапала! Ăçта кайса, ăçта вырăнаçĕç вĕсем? тет.

Хупах калат̆:

— Манăн вăрăсемшĕн ан хăра есĕ. Вĕсем хам патăмах ўксе, ку вырăнтах шăтса ўссе хама тăвăр тумĕç-ха. Май пулсан, манăн аҫасем те çĕр çинҫе хупах йăхне ĕрҫетме айаккалла кайĕç, тет.

Çу иртрĕ. Вĕрененĕн те, хупахăн та вăррисем тăраннă. Ирсерен шап-шур тăм ўкет. Сивĕ. Хупах çулçисем тăм тивнипе шанса, хуралса çĕре лĕҫĕркенсе ўкрĕç. Тунипе куршанки анҫах тăрса йулҫĕç.

Вĕрененĕн те çулçисем сарăхрĕç. Çунатлă вăррисем, хаљ ўкетпĕр, хаљ вĕçсе кайатпăр, тесе тăраççĕ.

Пӗр каçхине çӗрле çӗрӗпе çил улашрӗ. Вӗренене çӗрӗпе çил-тӑвӑл хытӑ силлерӗ. Мӗскӗн вӗрене унталла кунталла тайӑлкаланса çеç ларат̌. Ирхине куршанкӑ пӑхат̌—вӗрененӗн пӗр вӑрри те çук. Пӗтӗмпе çӗрлехи çил-тӑвӑлпа таçта вӗçсе кайса пӗтнӗ. Куршанкӑ хӑй тӗрӗсех ларат̌. Унӑн пӗр вӑрри те тӑкӑнман.

Вӗрене çав ирех каллех куршанкӑна йатлама тытӑнҫӗ. Хӑй вӑррисенех мухтаса пӗтерейместь.

— Пӑх та тӑр ӗнтӗ манӑн аҫасене! Мӗн тӗрлӗ аван вӗçсе карӗç вӗсем! Пӗри те хам патӑма ӳкмерӗç. Пӗри те кунта ӳксе шӑтса хама канçӗрлес çук. Санӑн вӑррусем вырӑнтан та тапранман-ха. Пут̌сӗр йапаласем! Çакӑнтах ӳксе, çакӑнтах шӑтаççӗ пулӗ! Вӗсене никам та пӗтерес çук. Çырла пек ҫипер, тутлӑ пулсан, вӗсене сынсем те, кайӑк-кӗшӗксем те çиме илсе кайӗҫҫӗç. Мӑйӑр пек çимелле пулсан, шӑши те пулин килсе хӑй шӑтӑкне сӗтӗрсе кайӗҫҫӗ. Манӑн вӑрӑсем пек çунатлӑ пулсан, вӗçсе кайма пултарӗҫҫӗç.

Çунатти те, илемĕ те, тути те, ним усси те çук! Мĕнле майпа вĕсем кунтан хăпса кайĕç?

Куршанкă калаҫ:

— Есĕ мана хурласах пĕтерейместĕн. Епĕ çырла пек, мăйăр пек ҫипер, тутлă пулмасан та, вĕçсе кайма çунат çук пулсан та, хам анне патнех ўксе, хам анне çумĕнҫех шăтса ўссе хам аннене пурăнма тăвăр пултăр, тесе шухăшламастăп. Пирĕн анненĕн мĕн пур пĕтĕм вăрри çак хăй патнех ўксе шăтас пулсан, сывлама та вырăн çук пулаҫ. Санăн вăррусенĕн çунаҫĕ пур, вĕсем çунаҫĕпе вĕçсе кайаççĕ, манăн çунат вырăне çекĕл пур. Есĕ мана авантарах сăнаса пăх-ха: манăн йĕри тавра çекĕл-çке. Çуратнă çĕр-шывран, хам аннерен уйăрăлса кайас тесен, епĕ кам çумне те пулин вăйпах çатăрланса çакланса кайатăп-çке! терĕ.

Анкарти хуçи пĕрре лашине анкартине кăларса йаҫĕ. Лаши унта кунта çўрекелесе çатан хĕррипе куршанкă патне пырса тухрĕ. Куршанкă патĕнҫе типĕ куракcене суйласа çисе çўрет. Куршанкă хĕпĕртерĕ. Лаша куршанкăна сĕртĕнмессерен, куршан-

кă лаша çилки çумне çыпăçат̌. Каçҫен лаша çилки çумне куршанкă çĕкленми çакланҫĕ. Тĕпĕр ирхине хуçи лашине пасара кайма кӳлес тесе пыҫĕ те пăхат̌—лаша çилки куршанкăпа пĕтĕмпе çыхланса кайнă. Хуçи лашине тасатма тытăнҫĕ. Куршанкăна çилхи ăшăнҫен пĕрерĕн, пĕрерĕн тăпăлтарса кăларса пĕр пуç пек ҫăмăркка турĕ те, тислĕк купи çине кайса пăрахрĕ.

— Т̌ху! пут̌сĕр йапала! Ăçтан çăваран ĕрҫет çав куршанкă? тесе йатлаçса çын лаша кӳлме тытăнҫĕ.

Куршанкă пĕрре те ку çын йатлаçнăшăн хуйхăрмарĕ. Тислĕк купи тесен куршанкăшăн ырăлăх. Тислĕк купи çине ӳкнĕшĕн куршанкă пит хĕпĕртерĕ. Çавăнпа çын йатлаçни те куршанкă хулхине кĕмерĕ.

Пĕрре Ҫи-ҫи шăши çатан айĕнҫен тухрĕ те, типĕ курăксем хушшинҫе ҫаптăртаттарса çӳрет. Çатан тулĕпе пĕр лапсака йытă ҫупса пырат̌. Йытă çав шăши курăк ăшĕнҫе ҫăптăртаттарнине сисрĕ те, икĕ хулхине ҫăнк тăратса, çатан урлă йакăлт сиксе анкартне кĕҫĕ.—Мĕнле те пулин çимелли

кайăк мар-ши вăл? тесе йытă куршанкă тавра-шĕнҫе нăш-нăш шăршласа ҫӳреме тытăнҫĕ. Ҫи-ҫи, пит ҫийескер, йытта курсанах, вĕлт! турĕ. Кайса тыт ăна. Вăл пĕр куҫ хупса илеҫҫен хăйĕн шăтăкне кĕрсе ӳкнĕ те, пăш-каса выртать. Йытă ҫав куршанкă тавраш̆ĕнҫе ҫавăрăнкаласа ҫӳренĕ ҫухне лапсака хӳрине темĕн ҫухлĕ куршанкă ҫыпăҫтарнă. Хупахăн ҫара туни пĕтĕмпе пушанса йулҫĕ: пĕр куршанкă та йулмарĕ, тап-таса, ҫап-ҫара. Йытă анкартинҫен кайалла уйа сиксе тухсан, хăй хӳри йăвăрланнине сисрĕ. Йăран ҫине ларҫĕ те, хӳрине кышла-кышла куршанкăна тасатма тытăнҫĕ. Тасатса та пĕтереймерĕ, йытă малалла хăй ҫулĕпе ҫупрĕ. Ку йытă таҫта ҫитсе, таҫта ӳкерсе хăварать ĕнтĕ хăй хӳри ҫинҫи куршанкăсене! Сывă пул, ҫурал-нă ҫĕр-шыв! куршанкă ҫĕнĕ ҫĕре карĕ ĕнтĕ.

Ҫи-ҫи тепĕр кун ҫатан айĕнҫен каллех тухрĕ. Хура кĕр ҫитнĕ. Хĕвел пăхмасть. Ҫанталăк сӳрĕнкĕ: те ҫăмăр, те йур ҫăвас-шăн. Вĕрене те, хупах та ҫап-ҫара лараҫҫĕ. Пĕр-пĕрне йатлаҫмаҫҫĕ. Айхăланă пек сал-хуллă тăраҫҫĕ. Сивĕ. Ҫи-ҫи шăнса тĕршĕнет.

Халĕ çатан хĕррин҅е пĕрре те аван мар. Ним илемми те çук. Ҫи-ҫи пурăнакан шăтăкра пит аван. Унта çемçе йăвара ăшă. Ҫи-ҫи хăй ампарĕсене тем тĕрлĕ тырă та çĕклесе купаланă: тулă та, урпа та, ыраш та пур. Çитĕ, вырт хĕл каça ăшă йăвара. Сасартăк çатан витĕр сивĕ çил хайаррăн вĕр҅ĕ. Çил ши-ши, ши-ши шăхăр҅ĕ те, кĕрпе йур çума пуçларĕ. Ай, хĕл килет. Ҫи-ҫи хăй шăтăкне вĕлт турĕ.

---

## 2. Шĕшкĕ.

### I.

Кĕркунне шĕшкĕ тĕмине мăйăр татакан аҫасем пĕтĕмпе хуçса ватса пĕтернĕ. Мăнтаран шĕшкийĕ! Йепле ҫăтнă-ши вăл çав асапа? Пăхсан хаҫ хĕрхенес килет. Хуçăк тураҫĕсем шанса хуралса çĕрелле ҫикĕннĕ. Çулçисем таткаланса çурăлса пĕтнĕ. Кĕрхи хура тăм ӳкиҫҫенех йем-йешĕл ларакан шĕшкĕ хăй илемне çухатнă. Нумайах пулмасť, шĕшкĕ пит илемлĕ, тикĕс тăрăллă, хăмла пек мăйăрлă курăнса лараť҅ĕ. Халĕ пĕр мăйăр та çук. Шĕшки те илемсĕрленсе ванса йулнă.

Шĕшкĕпе йунашар пĕр ăвăс ларат. Хуллен çилпех хăйĕн хытă çулçисене çăтăл-çăтăл выљатат. Ăвăсăн ним шухăш та, ним хуйхă та çук, анђах шĕшкĕ çине пăхат те, хурланса, шĕшке хĕрхенсе калат:

— Шĕшкĕ тус, мĕн усси пур санăн мăйăр ўстерни? Пăх-ха ĕнтĕ ху çине ху. Санăн мăйăрруна татса, етем ађисем сана мĕн тĕрлĕ асаплантарса пĕтерне? Килес çул пĕр мăйăр та ан ўстер, ан çурат. Мăйăр çуратса ўстерни вăл ху шăмму-шаккуна ватни анђах, сана хуна ним усси те çук, тет.

Шĕшкĕ ăвăс çине вăйĕ-халĕ пĕтнĕ майĕпе аран-аран куçне уçса пăхрĕ. Типсе, хăрса кайнă çулçисене кăштăртаттарса, йăнăшса, аран сассине кăларса калат:

— Тĕрĕсех санăн сăмах, ăвăс тус. Килес çул пĕр мăйăр та ўстермĕп. Ай-йай-ай, шăмшак пит ыратат. Йĕпе-сапа пулат пуљ, тет.

Кĕрхи йĕпе-сапа пуçланђĕ. Йĕпе-сапа хыççăн хĕл те персе çитрĕ. Хĕлле шĕшке, лутраскерне, пĕтĕмпех йур сапса кайрĕ. Хĕлле пур йăвăçсем те ўсмесĕр тĕлĕрсе

ларђӗç. Çил-тăман улађђӗ, йур вӗçтеређђӗ, йăвăçсене нимӗн те мар: кашласа çеç ларăççӗ.

II.

Хӗл иртсен çуркунне пулђӗ. Вăрманти йур ирӗлсе пӗтрӗ те, çӗр ăшăнсанах пӗтӗм йăвăçсем, курăксем ђӗрӗле пуçларӗç. Шӗшкӗ те йур айӗнђен тухсанах ђӗрӗлме тытăнђӗ. Унтан куңтан кăђкăсем кăларђӗ. Хӗвел пӗçерет, ăшă çил вӗрет, кăђкăсенђен çулçăсем тухаççӗ. Иртнӗ кӗркунне шӗшкӗ мăйăр тăвас мар тесе тертленнӗђђӗ, анђах халђ тем тăвас ӗнтӗ: мăйăр те тăвас, те тăвас мар? Пур йăвăç та, пур курăк та кашни харпăр хăй майлă ђеђеке ларса хăшӗ çырла, улма, хăшӗ вăрă, хăшӗ мăйăр ўстереççӗ – йăвăç-курăк кашни хăй йăхне-тӗпне ӗрђетесшӗн. Пурте хӗвеле пăхаççӗ, унăн çуттишӗн çӳлелле туртăнаççӗ. Хӗвелӗ пурне те ыррăн пăхать, ăшă çил йарать-ађашлать. Пит аван, пит илемлӗ. Ав шӗшкӗрен айакра мар вăрман улмаççи курăнать. Вăл палăрми шурă-кӗрен ђеђекре ларать. Кӗркунне çав вăрман улмуççийӗн çӗклейми улми пулать. Вăрман улмуççирен айак-

рах мар пĕр çĕмĕрт йăвăççи çеçкере ларат, шап-шурă, шур кĕпеллĕ илемлĕ хĕр пек туйăнат. Шĕшкĕ пĕтĕм йăвăçсем харпăр хăй тĕллĕн çимĕç кӳме тытăннине курса шухăша кайрĕ.

— Ытти йăвăçсен пурин те вăрăсем— аҫисем пулаççĕ, епĕ çеç пушă ларатăп. Хĕвел хĕртсе пăхат, пит ăшă, пит аван. Хĕпĕртесе пурăнас, ӳсес килет, манăн та майăр ӳстермесĕр хурлăха йулас марҫҫĕ, тет шĕшкĕ. Хăй хĕвел ăшшинҫе çамрăк çулçисене ăшăтса ларат. Аманҫăк шĕшкĕн ҫунтан-вартан майăр ӳстерес килет. Кунĕ çĕрĕпе çавăн çинҫен шухăшлат. Шухăшларĕ-шухăшларĕ те, майăр тăвас тесе хатĕрленме тытăнҫĕ. Пĕр туратне пăхат—хуçăк. Тепĕр туратне пăхат—туратăн майăр пулмалли кăҫкисене иртнĕ кĕркунне аҫасем хуçса кайнă. Турат вĕçĕсем хуçкаланҫăк. Шĕшкĕн пит майăр туса, майăр ӳстерес килет. Кĕркунне шăмшак ыратнине те вăл маннă, анҫах темĕн ҫухлĕ майăр тăвас тесе тăрăшсан та, майăр ӳстерме май çук: шĕшкĕн пĕр тĕрĕс турат та, пĕр пĕрҫĕ вăй та çук. Шĕшкĕ пит хуйхăрса ларҫĕ.


1031

Куллев кун шĕшке хĕвел пăхат. Шĕшкĕ хуллен-хулленех кĕркуннехи суранĕсене хĕвел ăшшипе тӳрлетрĕ. Çĕнĕ туратсем, çĕнĕ кăҫкăсем кăларса ӳстерет. Тӳрленет, йусанат шĕшкĕ, хăй ăшĕнҫе хăйĕннех шухăшлат: усăсăр йăвăç çеç пултăм епĕ кăçал: пĕр мăйăр та ӳстереймерĕм. Мĕн манăн пурăнни! Хĕвел çутти сайа кайат, ах анҫах...

Хĕвел шĕшкĕ шухăшне пĕлсе, хуйхине туйса, шĕшкĕ тураҫĕсене аҫашшăн çутатат, хĕрхенсе пăхса кларĕ:

— Ан хуйхăр, пĕҫĕк, луртра шĕшкĕ. Санăн иртнĕ кĕркунне пит шăмму-шакку амансa пĕтнĕ. Етем аҫисем сана ытла хăрушла, тискеррĕн ватнă. Кăçал санăн канас пулат. Епĕ сана мăйăр ӳстерсен те, ӳстермесен те пĕр пекех пăхатăп. Пĕр пекех саншăн та ăшă сывлăш йаратăп Кăçаллăха канса, илемленсе лар-ха. Килес çур валли вăй хатĕрле, терĕ çут хĕвел. Хăй ăшшăн кулат, çутçанталăка илем кӳрет.

III

Çу иртет. Ирхине, каçхине сивĕрех. вăрман улмуççи улмисем саралҫĕç. Кашни çĕр,

тăм ўкмессерен, çĕре тăкăнаççĕ. Çынсем вăрмана пĕрнесем, хутаççем çака-çака килеççĕ. Мăйăр татаççĕ. Акă пĕр ирхине икĕ аҫа çак шĕшкĕ патне пыҫĕç. Мăйăр шыраса тураҫĕсене сире-сире пăхаççĕ. Пĕр мăйăр та çук.

— Пĕлтĕр епĕр çак шĕшкĕ çинҫе пит нумай мăйăр тупнăҫҫĕ, кăçал пĕр мăйăр та çук, терĕ пĕр аҫи.

— Çаплаҫҫĕ çав. Иксĕмĕр çак шĕшкĕ çинҫен мăйăр татрăмăр-çке. Астуса илтĕм ĕнтĕ епĕ те. Епĕр ку шĕшке мăйăр татнă ҫух пĕтĕмпе хуçса, ватса пĕтертĕмĕр. Есĕ ăна астăватăн-и? терĕ тепĕр аҫи.

— Астăватăп-çке, тет малтанхи.

Аҫасем шĕшкĕ патĕвҫен çапла калаçкаласа иртсе кайрĕç. Шĕшкĕ, аҫасем иртсе кайсан, хĕпĕртесе хуллен çилпе çулçисене силлентерсе илҫĕ. Кăçал шĕшкĕнне пĕр çулçă та, пĕр турат та никам хуçман, шăм-шак ыратасси çук.

— Ҫипер ырă-сывă пулсан, килес çура валли çĕклеймн мăйăр ўстерĕп. Анҫах...ах анҫах ку егеме... Пĕтерет мана етем, тесе хурланса илҫĕ шĕшкĕ. Çавăнтах пĕлтĕрхи

асапа, хуçăк тураҫĕсене, çапкаланҫăк тăракан çулçисене аса илҫĕ те, пĕтĕм пĕвĕпе, çулçи вĕçĕсемпе ҫĕтренсе çӳçенсе кайрĕ. Хăй хĕвел çинелле пăхрĕ те, есĕ çав етем аҫисене кала-ха, тархаслатăп сана: шĕшкĕ тĕмине ватсан, унăн мăйăрĕ пулмасҭ, те. Вара вĕсем йăвăç-курăка питех ватмĕç-и тен? терĕ шĕшкĕ.

Хĕвел те шĕшкĕ шухăшĕсемпе килĕшрĕ

— Çапла, çапла, лутра шĕшкĕ, тесе çуталса илнĕ пек пулҫĕ.

---

## 3. Аслати.

Кăнтăрла çигсе килет. Хĕвел пит пĕçерет. Пĕлĕт хĕрринҫе хураллă-шураллă çăмăр пĕлĕҫĕсем купаланса тăраççĕ. Тапхăр-тапхăр айакран, хуллен аслати сасси илтĕнет. Ҫавук пиҫҫен улмуççи пахҫинҫе аҫа-пăҫа сасси пур. Айакранах йан-йан илтĕнет. Вицĕ хĕр аҫа çатан карта çинҫе лараççĕ. Лапсака, вĕтĕ улмаллă улмуççи аҫасем лараkан тĕле сулхăн тăваҭ. Аҫасем виççĕшĕ те аркисене

сип-симӗс вӗтӗ панулми тултарнӑ. Хӗвелпе пиҫсе. хуралса кайнӑ урисене суллакаласа улма ҫисе ларaҫҫӗ.

— Епӗр улма ҫинине есӗр никама та ан калӑр, тетултӑ ҫулхи Укҫине—Ђавук пиђђе хӗрӗ. Хӑй симӗс панулмине ирӗксӗр ҫинӗ пек, тути-ҫӑварне ђалӑштарса, куҫӗсене хӗссе ђӑмлаť.

— Атте пасартан килет пуљ ӗнтӗ. Вӑл епӗр улма ҫинине курсан йатлаҫаť. Улмана пулса ҫитмесӗр ҫимеҫҫӗ, тет. Пулса ҫитмесӗр ҫисен, аслати ҫапаť, тет.

— Халљ пире аслати ҫапаť-и ӗнтӗ? тесе ыйтрӗ пӗђӗк, пилӗк ҫулхи Марук. Хӑй ҫыртнӑ улмине ҫӑварӗнђен кӑларса илђӗ: аслати ҫапаť пулсан, ҫыртнӑ улмана та пулин ҫийес мар.

— Ђӑнах ҫапаť-и вара? тесе татах ыйтаť Марук, йӗрсе йарас сассипе.

Ҫиђӗ ҫулхи Праски, ҫак хӗр ађасенђен ђӑн пысӑкраххи, хӑйне хӑй пысӑк ҫын вырӑнне хурса калаť:

— Хӑш ђухне ҫапаť, хӑш ђухне ҫапмасť, тет. Хӑй ҫыртнӑ улмине, йӳҫӗ пулнӑран ывӑтса йаđӗ те:

— Пĕтĕккисене çапаť, пысăкраххисене, ман пеккисене, çапмасť, тесе хутĕ. Улмисене хăшне-пĕрне çĕре пăрахаť, хăшне-пĕрне çыртса пăхса арки çине хураť. Питне-куçне пĕркеленгерсе, йăвăр ĕç тунă пек тĕрĕ улмана çатăртаттараť.

— Çук, аслати вăл кирек кама та çапаť. Пĕтĕккисене, пысăккисене,—пурне те çапаť. Кам улма çийет, çавна çапаť; есĕ ху та пĕлместĕн, терĕ Укçине. Праски йенелле çавăрăнса лартĕ те, тутипе кăшт витлесе те илтĕ.

Праски хăйĕннех:

— Есĕ ху та пĕлместĕн, асту, пĕлекенни килсе ларнă кунта. Епĕ сиртен пысăкрах-ха. Есĕр иксĕр те нимĕн те пĕлместĕр. Ман пек пысăккисене аслати улма çисен те çапмасť. Епĕ пĕлтĕр панулмине пўрне вĕçĕ пек пулсанах çивĕ те, мана çапах аслати çапман-çке. Пысăкрах атасене сапмасť çав вăл аслати. Сана та, Укçине, аслати çапмасť пулĕ-ха. Çу-ук, сана та çапмасť. Есĕ Марукран пысăкрах вĕт. Марук пĕтĕккĕ. Ăна çăмăр килсенех аслати шартлаттарсах пăрахаť акă!

Укҫине, хăйне Праски аслати ҫапмасӑ тенӗрен, Праски майлă пулса та тăҭӗ.

—Мана та аслати ҫапмасӑ, сана та Праски, ҫапмасӑ, Марука ҫеҫ ҫапаӑ.

Укҫинен пиҭӗ, хăйне аслати ҫапмасӑ тенӗрен, савăнăҫлă, анҭах ҫавăнтах пӗҭӗк хӗр пиҭӗ хурлăхлă та пулҭӗ.

—Марука аслати ҫапсан, Марук ҫук пулаӑ-ҫке вара. Марук ҫук пулсан, манăн кампала выҫас? Праскипе йатлаҫсан, епӗ Марук патне кайаттăм. Марук ҫук пулсан, выҫас килмест манăн. Ах, епӗ Марука та аслати ан ҫаптăр, тетӗп те...

Укҫине Марукшăн хуйхăрса, хуйхăллă куҫӗсемпе Марука пăхса илҭӗ.

Марук пӗр шарламасăр йулташӗсем каласнине итлесе лараӑ. Куҫӗсемпе пӗр шăтармасăр йулташӗсене пăхаӑ.

— Праски, есӗ аслатине курнă-и? терӗ Укҫине.

— Ху курнă-и? тет Праски.

— Епӗ курман та, пирӗн атте курнă, тет Укҫине.

— Кам пек вăл аслати?

Укçине аслати мĕнлине каласа пама тытăнђĕ. Хăйне хăй пысăк çын вырăнне хурса, аслати çинђен пит хăрушшăн каласа пама тăрăшат̆. Хăй куçĕсене пысăклатнă, тутисене мăкăртса калаçат̆.

— Аслати хŷлтĕр-хŷлтĕр тăват̆ те, вара çăмăр çăват̆. Аслати хŷлтĕртетни—вăл урапа ђупни, тет. Веç, ав, увта пĕлĕтсем курăнаççĕ. Укçине сăрт пек купаланса тăракан хурал-лă-шурăллă пĕлĕтсене аллипе тĕллесе кăтатрĕ.

— Çав пĕлĕтсем тăрăх Илле пророк шыв турттарса урапапа ђупат̆. Урапи сăртсемпе пынă ђух хŷлтĕр-хŷлтĕр тутарса пырат̆—аслати пулат̆. Илле пророк лаши сăртран аннă ђух хытă ђупсан, шывĕ пиђĕкере ђŷхенсе сирпĕнет. Çавă çăмăр çуни пулат̆. Илле пророк лашине вутлă ђăпăрккапа хăвалат̆ тет. Вăл çиçĕм çиçни. Пирĕн атте аслати пĕлĕт тăрăх çŷренине пит пĕлет. Мана çавăнпа улма çиме хушмаст̆. Улмана пиçсе çитмесĕр çисен, Илле пророк вутла пушшипе çапат̆ тет те, çунтарат̆, тет. Ађасем виççĕшĕ те çăмăр пĕлĕђĕсем çинелле пăхаççĕ Çавракаланса тăракан çутă

тӑрӑллӑ пӗлӗтсем ҫинҫе Илле пророк лашапа, пиҫӗке ҫыхнӑ урапапа, тӑрлаттарса пырассӑнах туйӑнаҭ.

— Укҫине-е-е! Ӑҫта есӗ? Кил хӑвӑртрах! Аҫу пасартан кулаҫ илсе килҫӗ!

Укҫине амӑшӗ Укҫинене ҫӗнет. Укҫинен аслати ҫинҫен тата калас кӑмӑл пурҫҫӗ. Амӑшӗ сассине илтсенех, Укҫине хӑпӑл-хапӑл арки ҫинҫи улмине силлерӗ те, ҫатан ҫинҫен анса, килне вӗҫтерҫӗ.

Вӑл темӗн ҫӑмӑр пӗлӗҫӗсем йал ҫинелле тӑвӑнса килнӗ, хӗвел хупланҫӗ. Праскипе Марук, йӗри тавра мӗн пулнине сӑнамасӑр, улма ҫикелесе лараҫҫӗ. Сасартӑк аслати хайаррӑн авӑтса йаҫӗ. Хӗр аҫасем шартах сиксе шари! ҫухӑрса йаҫӗҫ.

— Цӗтрӗмӗр, аслати хаҫ ҫапса пӑрахаҭ пире улма ҫинӗшӗн, тесе шухӑшларӗҫ пӗҫӗк ҫынсем. Иккӗшӗ те кӗл пек шап-шурӑ шуралса кайса аркӑ ҫинҫи улмасене ҫӗре сирпӗтрӗҫ. Праски хӑвӑртрах ҫатан ҫинҫен анҫӗ те, киле вӗҫтерҫӗ. Ҫавӑрӑна-ҫавӑрӑна пӑхса ҫупаҭ. Пӗҫӗк Марук кӗске алӑ-урисемпе тапашланса ҫатан ҫинҫен ҫасах анаймарӗ. Пӗҫ-

ҫен йулсан, Марук макăра-макăра ҫатан ҫинҫен анкаласа килнелле ҫупрĕ. Ҫупаҭ ҫупаҭ, нимĕн ҫул та кайаймасҭ. Сасартăк ҫил-тăвăл ҫаврăнса ҫитрĕ. Улăм пĕрҫисем, ҫўпĕ-ҫапă, тусан вĕҫсе килсе, Марука питĕнҫен пырса ҫапăнҫĕҫ. Марук ниҫта кĕрсе кайа пĕлмесĕр ҫатан ҫумне ҫухăра ҫухăра тĕрщĕнсе тăҫĕ. Аслати пĕр ҫарăнмасăр пекех ҫĕр кисрентерсе авăтаҭ. Ҫил-тăвăл урараn ўкерес пек, ҫĕре ўпнепитне ҫаврăнса пăрахас пек, тулашаҭ.

Ҫав вăхăтра Марук амăщĕ хăйĕн икĕ аслă хĕрĕпе пўртре ларнă. Ҫил-тăвăл ҫиксĕр пăтранса килнине курсан, амăшĕ 16 ҫулхи Вассана:

— Ҫуп-ха, тухса ил-ха хăвăртрах Марука. Аҫа тăвăлтан хăраса пит ҫухăраҭ пуҫ. Паҫăр вăл хĕр аҫасемпе Љавук карти ҫинҫе лараҭҫĕ. Ҫуп-ха, кайса ил, терĕ.

Васса, тăвăл килитҫен тĕрĕ тĕрлесе ларакансker, халĕ тĕррине пуҫтарса хунă та, сак ҫинҫе кашни аслати авăтмассерен сăхсăхса лараҭ.

— Персе вĕлеретĕп тесен те тухмастăп халĕ епĕ пўртрен. Аслати те ҫапса пăрахĕ.

Мĕнле ђунпа тухас манăн çав хайар çил-тăвăл çине, терĕ Васса. Çиçĕм пит вăйлă çиçрĕ те, Васса сак çине шаларах сиксе сăхха персе илђĕ.

— Епĕ Марука кайса илетĕп, терĕ 12 çулхи Лисук, пионер шурналне пăхса ларансскер. Лисук нумайах пулмасť шкултан пионерсен пуххинђен таварăннă, шурналне те çавăнтан илсе килнĕ. Лисук пионер отретне кĕркуннеренпе çыраннă. Пионер йăлисене, пионер саккунĕсене Лисук пит аван пĕлнĕ. «Хатĕр пул!» тенине мавман. Пионер паттăр. Хăрушă вăхăтра кансĕр ĕçе тума пионер йаланах хатĕр.

Лисук вуласа ларакан шурналне хупрĕ те: анне, епĕ кайрăм, тесе пўртрен хăвăрт тухса кайрĕ. Васса сăхсăхса лараť.

— Сана, комунис ђĕппине, аслати те çапмасť пуђ, тесе йулђĕ. Аслати тата хытăрах аватнă пек туйăнаť. Çил-тăвăл куçа уçма та çук вăйлă. Пĕр ђарăнмасăр çиçĕм çиçет. Ђăнахах та пит хăрушă.

Кăшт тăрсан, Лисук Марука пўрте йăтăрлантарса та кĕђĕ. Марук сиксе ђĕтресе

çухăрат̆. Амăшĕ Марука йăпатса аркă çине тытса ларђĕ. Марук амăшĕ арки çинђен анса кăмака хыçнелле кĕрсе кайма хăтланат̆.

Лисук йăмăкне ыталаса тытрĕ тэ: Мĕншĕн, Марук, йĕретĕн? Ентĕ киле çитрĕмĕр вĕт. Çил-тăвăл хаљ иртсе кайĕ, ан йĕр, тет.

Марукĕ темĕн каласшăн, анђах хытă ĕсĕкленипе каласа йараймаст̆.

Амăшĕ те йăпатат̆, Марук çаплах йĕрет.

— А-а-а аслати çа-а-апат̆, е-е-епĕ у-у-улма çинĕ çав, тесе йађĕ хайхи Марук, макăрма ђаранаймасăр, пĕтĕм пĕвĕпе ђĕтресе.

— Улма çинĕ?! Улма çинĕшĕн нихăçан та аслати çапмаст̆. Уншăн пулсан пĕрре те ан йĕр, терĕ Лисук. Хăй йăмăкĕ патĕнђе ăшшăн кулкаласа тăрат̆. Йăмăкне пуçĕнђен те шăлат̆, йыварскерне, çĕклесе те пăхат̆.

— Ан йĕр, Марук, улма çинĕшĕн аслати çапат̆, тесе ăна ахаљ калаççĕ. Акă есĕ кантăкран пăхса тăр-ха, терĕ Лисук. Хăй çавăнтах Марука кантăк умне аран-аран çĕклесе тăратрĕ те, пўртрен хăвăрт тухса кайрĕ. Кăшт тăрсанах Лисук хăй сапăунĕпе

пахҫаран пӗр аркӑ тулли вӗтӗ пан улми йӑтса кӗҫӗ.

— Акӑ, пӑх, Марук. Епӗ пӗр аркӑ улма пуҫтартӑм. Аслати авӑтнӑ, ҫиҫӗм ҫиҫнӗ ҫухнех улмана ҫийетӗп, есӗ кантӑкран пӑхса тӑр.

Лисук каллах пӳртрен вӗлт тухрӗ те, карташӗнҫе тӑрса, Марука кантӑк виттӗр калаҭ:

— Пӑх-Марук, улма ҫийетӗп, астуса тӑр, аслати ҫапҭ-аи мана терӗ, карташ варринҫе уҫӑ ҫӗрте тӑрса, улма ҫиме тытӑнҫӗ. Ҫилтӑвӑл кӑпіт лӑпланнӑ пек, анҫах аслати тата хытӑрах хӳлтӗртетет, ҫиҫӗм йӑл-йал тусах тӑраҭ. Ҫанталӑк тата хытӑрах тӗттӗмленҫӗ. Акӑ пӗр-икӗ тумлам шултра ҫӑмӑр пӑт-пат ӳккелерӗ. Лисук карҭаш варринҫен кулкаласа улма ҫисе тӑраҭ. Сасартӑк ҫӑмӑр ҫӗреслетсе йара паҫӗ. Лисук силленкелесе пӳртe ҫупса кӗҫӗ.

— Куртӑн-и, Марук, мана аслати улма синӗшӗн ҫапрӗ-и? тесе ыйтрӗ,

— Ҫапмарӗ-ҫке, терӗ Марук цӗтӗм пӗҫӗк пит-куҫӗпе хӗпӗртесе, ҫуталса кайса.

— Ан ман, Марук: аслати ҫынна нихҫан та улма ҫинӗшӗн ҫапмасť. Улмана пулса ҫитмесӗр ҫисе пăхма кирек хăҫан та йураť, анђах ытла нумай ҫисен. вăл, пулса ҫитменскер, вар-хырăма пăсаť, тата ҫиме те тутлă мар. Аслати вăл улма ҫинипе ҫименнине пӗлмест. Илле пророк ҫинђен калани вăл йуптару ҫеҫ. Ăна ахаљ туртса кăларнă. Ҫиҫӗмпе аслати вăл хăй тӗллӗн тӗнђери вăй-хăват. Ăна Илле пророк илсе ҫӳремест. Аслати вăл ҫил пек, ҫăмăр пек, хăй тӗллӗн пулаť.

Ҫăмăр ђӗреслетсе нумайђђенех ҫуса тăмарӗ, ђасах иртсе кайрӗ. Кай йенђен пӗлӗт ҫуталса та килђӗ. Кăпт тăрсан хӗвел те пăхса йађӗ. Хура пӗлӗт айӗнђен тухса, кулса йанă пек пăхаť. Хура пӗлӗтсем мал йеннелле купаланса шурӗҫ. Кăвак пӗлӗт ҫăмăр хыҫҫăн тасалса ҫăваннă пек, тата кăвакрах, ҫутăрах. Улăх урлă асамат кӗперӗ ӳкрӗ. Марук ҫăмăр ђаранна-ђаранман урама сиксе тухрӗ. Пӗђӗк ҫын пӗтӗм ђӗререн, аслати мана улма ҫинӗшӗн ҫапмасť, тесе савăнаť. Унта-кунта, шыв кӳленђӗкӗсем пур. Марук кӗпине ҫӗклесе кӳленђӗксенђе ҫара уран утса ҫӳрет. Пӗђӗккӗскер,

унталла та, кунталла та ђупкалаť, шыва урипе çапса сирпĕтет. Тапхăр-тапхăр хуллен аслати сасси илтĕнет: мăкăртатса, пĕр çилĕсĕр авăтнă пек туйанаť. Марук аслати сасси илтĕнмессерен хăй ăшăнђе: ах, мĕн тĕрлĕ ырă, аслати улма çинĕшĕн çапмаcť, тесе шухăшласа илет те, Марукăн савăннипе сиккелесе ђупас килет. Çавăнтах хăрах уран та сиккелесе илет. Хĕвел çинђе хăй мĕлки сиккелернипе хăй кулаť. Пĕтĕм çутçанталăк Марукшăн урăхла, илемлĕ, савăнаçлă. Ђун нимĕнрен те хăраса тарăхмасť. Пĕђĕк тăн-пуçа пусмăрласа, хупăрласа тăракан ултав сирĕлнĕ.

Çăмăр иртсе кайсан, ђылайран тин, Праскипе Укçине выђама тухрĕç. Праски аслати сасси илтĕнми пулитђенех сăкман пĕркенсе шăналăк ăшĕнђе пăшкаса выртрĕ. Укçине икĕ аллипе питне хупласа сакайне кĕрсе ларнă та, амăшĕ туртса кăлармасăр та тухмарĕ. Халĕ те кăшт айакра аслати сасси илтĕнсенех, килнелле тарса кĕме хăтланаççĕ. Марук йулташĕсене урамра курсан, вĕсем патне ђупса пыђĕ. Хăйен кĕпи ђĕркуççи таран йĕп-йĕпе. Пиђĕкуçĕ пысăк хĕпĕртемелли йапала пулнă пек савăнăçлă.

— Есĕр хăвăр нимĕн те пĕлместĕр. Улма ҫинĕшĕн аслати ҫапмасҭ. Пирĕн Лисук пайан аслати умăнҭех, карташĕнҭе, улма ҫисе тăҭĕ, нимĕн те ҫук, ҫапмасҭ. Вăт, пĕрре те ҫапмарĕ. Улма ҫинĕшĕн аслати никама та ҫапмасҭ, тет.

Лисук пуҫне суллакаласа, аллисене выҗаткаласа, йулташĕсене каласа кăтартаҭ. Праскипе Укҫине нихҫан та, Марук калапине тăнласа тăракан марҭҭĕ, халĕ пĕр шарламасăр, тĕлĕннипе хытса кайса итлесе тăраҫҫĕ.

— Ĕненмесен, аҭăр Лисукран хăйĕнҭен ыйтар. Лисук аслати умĕнҭех улма ҫирĕ те, ҫапах асати ҫапмарĕ.

Хĕр‛аҭасем виҫҫĕшĕ те, Лисук патне урисемпе шыв сирпĕтсе ҭупрĕҫ.

---